Абрамова-Элекина А.А. Ҫынна тата илеме юратакан пысӑк чӗреллӗ ҫын : [поэт ҫинчен каласа пани] / А.А. Алексеев ҫырса илнӗ // Хыпар. – 2000. – 12 авӑн.

ПАР 2000, авӑн, 12

КОНСТАНТИН ИВАНОВ: 110 ҪУЛ

# ҪЫННА ТАТА ИЛЕМЕ ЮРАТАКАН ПЫСӐК ЧӖРЕЛЛӖ ҪЫН

1908 ҫулхи кӗркунне, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн 40 ҫулне уявлас умӗн, Иван Яковлевич тӑрӑшнипе «Сказки и предания чуваш» /Чӑваш халапӗсем/ кӗнеке пичетленсе тухрӗ. Кӗнекере халӗ пур чӑваш та пӗлекен «Арҫури», «Нарспи», «Тимӗр тылӑ», «Тӑлӑх арӑм» тата ытти произведенисем пурччӗ. Халӗ вӗсен пурин ячӗсене те ас тӑваймастӑп ӗнтӗ.

Кӗнеке пичетленсе тухсанах пӗтӗм шкулӗпе Нарспипе Сетнерӗн телейсӗр юратӑвӗ ҫинчен калаҫатчӗҫ. Пӗр каҫхине пирӗн общежитие Наталия Яковлевна наставница пычӗ, унӑн аллинче – «Сказки и предания чуваш» кӗнеке. Вӑл пире кӗнекери произведенисемпе паллаштарчӗ, хӑш-пӗр сыпӑкӗсене вуласа пачӗ. «Нарспи» поэмӑна куҫару комиссийӗнче ӗҫлекен К.В.Иванов ҫырни ҫинчен пӗлтерчӗ. Аслӑрах классенче вӗренекенсем те «Нарспие» 1907 ҫулхи забастовкӑна хутшӑннӑшӑн шкултан кӑларса янӑ К.В.Иванов ҫырнӑ тесе калаҫатчӗҫ. Анчах хӑйне эпир, иккӗмӗш класра вӗренекенсем, пӗрре те курман-ха. Вӑл хамӑр хушӑрах пурӑннӑ, ӗҫленӗ пулин те – эпир ун ҫинчен нимех те пӗлмен, илтмен.

Иван Яковлевич шкултан кӑларса янӑ ачасенчен хӑшӗ мӗн чухлӗ талантлӑ пулнине, халӑх ӗҫне мӗн чухлӗ пулӑшу кӳрессе пӗлсе тӑнах ӗнтӗ. Ҫавӑнпа вӑл вӗсемпе мӗнле те пулин усӑ курма, хӑйӗн тӗп тӗллевне – тӑван халӑх культурипе вӗренӳлӗхӗн шайне ҫӳлерех хӑпартас ӗҫре усӑ курма тӑрӑшнӑ, халӑх ӗҫне пулӑшу пултӑр тенӗ. Вӑл икӗ «пӑлхавлӑ ачана» каялла йыхӑрттарса илнӗ те куҫару ӗҫне хутшӑнтарнӑ, славянла е вырӑсла ҫырнӑ тӗн кӗнекисене куҫарма, редакцилеме лартнӑ. Вӗсенчен пӗри – Константин Васильевич Иванов, тепри Николай Васильевич Шупуҫҫынни пулнӑ. Хутран-ситрен Лермонтов, Толстой произведенийӗсене куҫараҫҫӗ тетчӗҫ вӗсене те ҫывӑх пӗлекен вӗренекенсем. Пурӑнасса шкулӑн ҫӗнӗ ҫуртӗнче пурӑнатчӗҫ. Унта вӗсене ятарласах пӗр пӳлӗм уйӑрса панӑччӗ. Вӗсене Иван Яковлевич кӑна мар, ытти вӗрентекенсем те питӗ хытӑ сӑнасах, тӗрӗслесех тӑнӑ.

Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн 40 ҫулне уявланине хальхи пекех ас тӑватӑп. Ҫак аслӑ уяв тӗлне эпир классене, коридорсене, картишне тасатса тирпейлерӗмӗр; арҫын ачасем столяр мастерскойӗнче ӗҫлетчӗҫ, платник ӗҫӗсене тӑватчӗҫ. Иван Митрофанович Дмитриев регент ертсе пынипе шкул хорӗ уяв тӗлне ҫӗнӗ юрӑсем юрлама вӗренчӗ. Пултаруллӑ композитор пулмаллаччӗ вӑл: анчах ҫамрӑклах чахутка чирӗпе вилчӗ. Пирӗн шкулти вӑл ертсе пыракан хор Чӗмпӗрте чи ӑста юрлаканни шутланатчӗ. Эпир хулара дворян обществин уявӗнче те вырӑсла, чӑвашла юрланӑ. «Юрӑ сӑмахӗсене уҫӑмлӑрах калама, юрлама тӑрӑшӑр. Хӑнасем нумай пулаҫҫӗ», – тетчӗ Иван Митрофанович.

Чӑнах та уява тӗплӗн хатӗрленсе, чыслӑн ирттерсе ятӑмӑр. Ун чухне курнисем халӗ те куҫ умӗнчех. Шкулӑн акт залне вӗренекенсемпе вӗрентекенсем, хӑнасем – хулари ытти тӗрлӗ шкул директорӗсенчен пуҫласа кӗпӗрнаттӑр таранах – пухӑннӑччӗ.

Пирӗн арҫын ачасемпе хӗрачасен хутӑш хорӗ сцена хыҫне йӗркеленсе тӑнӑ. Ҫынсем салам сӑмахӗ каланӑ хушӑрах хор «Житейское море», «Многие лета» тата ытти юрӑсем юрларӗ.

Уяв ячӗпе салам калакансем нумай пулчӗҫ. Вӗсем пурте Иван Яковлевич усӑ Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн халӑх пурнӑҫӗнчи вырӑнӗпе пӗлтерӗшӗ ҫинчен калаҫрӗҫ, Иван Яковлевича, унӑн пархатарлӑ ӗҫне мухтарӗҫ.

Уяв ларӑвне Чӗмпӗр кӗпӗрнаттӑрӗ хӑй ертсе пычӗ. Пирӗн шкулӑн аслӑ класӗнче вӗренекен хӗрачасем Иван Яковлевича тӗрленӗ сӗтел сарми парнелесе чыс турӗҫ. Акӑ кӗпӗрнаттӑр К.В.Иванова сӑмах парать. Сцена ҫине йӑрӑс пӳллӗ, хура костюм тӑхӑннӑ, ҫавракарах питкуҫлӑ, кӑшт тӗксӗмрех ӳтлӗ каччӑ тухрӗ. Вӑл Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн 40 ҫулне халалласа ҫырнӑ сӑввине вуласа пачӗ. Унта вӑл Иван Яковлевич хӗрӗх ҫул хушши ырми-канми туса пынӑ ырӑ ӗҫне, чӑваш ҫырулӑхӗпе ҫут ӗҫне мухтаса ҫырнӑччӗ. Эпир те, сцена хыҫӗнче тӑракансем, залра ларакансем те чӑвашла сӑвӑ вулакан ҫын ҫине тӗлӗнсе пӑхатпӑр. Унччен эпир нихӑшӗ те ҫакӑн пек чаплӑ лару-тӑрура чӑвашла сӑвӑ вуланине илтмен те, курман та. Унччен чӑвашла сӑвӑ ҫырма ҫук тесе хур тӑвакансене питленӗ пек, витӗмлӗ сасӑпа янӑрарӗ поэт сасси. Ҫакна итлесен эпир тӗлӗнсех кайрӑмӑр: «Акӑ кам, мӗнле ҫын иккен вӑл «Нарспи» авторӗ», – тетпӗр хамӑр ӑшра. Унӑн сасси сцена ҫинчен ансан та хӑлхара илтӗнсе тӑчӗ.

Унччен чӑвашсенчен никам та чӑваш чӗлхи ҫакӑн пек уҫҫӑн та илемлӗн янӑраса каясса, пӗтӗм чӑваш халӑхне тивӗҫлӗ литература чӗлхи пулса тӑрасса шанман. Вун ҫичӗ ҫулхи каччӑ тӑван чӗлхене лайӑх чухласа питӗ ҫыпӑҫуллӑ, ӑста ҫырма пултарнинчен чӑннипех тӗлӗнмелле. Хумханнӑ Иван Яковлевичӑн куҫӗсенчен те савӑнӑҫ куҫҫулӗ юхса анчӗ. Вӑл кӗсйинчен шурӑ тутӑр кӑларчӗ те куҫӗсене шӑла-шӑла илчӗ. Тухса каланӑ хӑнасене вӑл тав туса каланине те ас тӑватӑп. Савӑнӑҫлӑ ларӑва Глинкӑн «Славься» юррипе вӗҫлерӗмӗр.

Уяв умӗн те, уяв хыҫҫӑн та пӗтӗм шкул «Сказки и предания чуваш» кӗнеке вулатчӗ. Уйрӑмах вӗренекенсем «Нарспи» поэмӑна килӗштернӗччӗ, ӑна каҫса кайсах вулаттӑмӑр. Класа Наталья Яковлевна пырсан та эпир унпа пӗрле ҫавӑн ҫинченех калаҫаттӑмӑр. Нарспипе Сетнере хӗрхенсе вӑрттӑн йӗнӗ самантсем те пулнӑ пирӗн.

Ҫак кӗнекешӗн эпир пурте савӑннӑччӗ, вӑл кашни вӗренекенӗн аллинчех пулнӑ. Константин Васильевич Иванов ҫав териех чун-чӗрене хумханмалла ҫырма пултарнинчен тӗлӗнеттӗмӗр. Пирӗнпе пӗрле вӗренекен, чӑвашла чухлакан вырӑс ачисем те «Нарспие» юратса вулатчӗҫ, хисеплетчӗҫ.

Эпир вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн К.В.Иванов Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчех юлчӗ. Урӑх эпӗ ӑна курман. Вӑл 1915 ҫулхи ҫуркунне вилнӗ тенӗ хыпар Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчен пирӗнтен маларах вӗренсе тухнисен хушшинче питӗ хӑвӑрт сарӑлчӗ. Константин Васильевич тимлӗ те лӑпкӑ кӑмӑллӑ каччӑ пек туйӑнатчӗ. Вӗренекенсемпе пит хутшӑнсах кайман вӑл. Пӗвӗпе вӑл вӑтамччӗ. Ҫавракарах хӳхӗм пит-куҫлӑччӗ, кӑмӑллӑ та хитреччӗ. Чӑлт шурӑ кӗпе хура костюм айӗнчен кӑшт курӑнса тӑратчӗ, хура ҫӳҫне каялла ҫавӑрса хунӑччӗ. Каҫсерен, ҫывӑрас умӗн, ӑна хӑйӗн ҫывӑх юлташӗсемпе – иккӗн е виҫҫӗн шкул картишӗнче уҫӑлса ҫӳренине часчасах курма пулатчӗ. Шкултан тухсан инҫех те мар Сӗве урлӑ кӗпер пурччӗ. Пӗр ҫулхине ҫуркунне ӑна юлташӗсемпе кӗпер ҫинчен, карлӑк ҫумне таянса тӑрса, пӑр кайнине пӑхса тӑнине курнӑччӗ. Ҫывӑх пӗлмен пулин те, вӑл пире хавас кӑмӑллӑ, тарӑн шухӑшлӑ, ҫынна, ҫут ҫанталӑк илемне юратакан пысӑк чӗрелле ҫын пек туйӑнатчӗ.

**А.А.АБРАМОВА-ЭЛЕКИНА каласа панине А.А.АЛЕКСЕЕВ журналист ҫырса илнӗ.**